**Формирование интереса детей к прошлому своего народа, его культуре, традициям через реализацию проекта «Учим играя чувашский»**

**Кузнецова Н.Н.,**
**Иванова З.В.,**
**Филиппова Н.В.**

Ырӑ кун пултӑр! Эпир, 116-мӗш ача-пӑча садӗнче ӗҫлекенсем: Иванова З.В., Кузнецова Н.Н., Филиппова Н.В. тата Паян сирӗн умра хамӑр ача-пӑча садӗнче «Вӗрентпӗр чӑвашла выляса та савӑнса» проекта мӗнлерех пурнӑҫласа пынине кӑтартса парасшӑн.

Тӑван чӗлхе – халӑхӑн пуянлӑхӗ. Чӗлхе пӗтсен халӑх та пӗтет. Тӑван чӗлхене упраса, сыхласа хӑварасси, ӑна малалла аталантарасси пирӗн, вӗрентекенсен, чи пӗрремӗш тивӗҫ. Мӗншӗн тесен эпир чӑвашсем. Пирӗн хамӑр чӑваш ачисене мӗн пӗчӗкренех хамӑр халӑха, чӗлхене юратма, унпа мухтанма вӗрентмесен, пирӗн халӑхӑн малашлӑхӗ пулмасть.

Пирӗн ача-пӑча сачӗ «Тӑван чӗлхе – анне чӗлхи» Республика проектӗнче 6-мӗш ҫул хутшӑнать. Ҫавӑнпа та пулӗ ӗнтӗ пирӗн ача-пӑча садне ҫӳрекен, шкул ҫулне ҫитмен ачасем тӑван чӗлхепе иртекен конкурссенче, викторинӑсенче тата чӑваш уявӗсенче хаваспах хутшӑнаҫҫӗ. Вӗрентекенсем ачасене кашни эрнерех, уйӑхрах ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ чӑваш халӑх халап-юмахӗсемпе, сӑвви-калавӗсемпе, юрри-ташшисемпе паллаштарма тӑрӑшаҫҫӗ. Ачасене интереслӗрех пултӑр тесе тӗрлӗрен-тӗрлӗ вӑййасем, технологисем усӑ курма тӑрӑшаҫҫӗ.

Ачасен чӑваш пуплевне аталантарма тӑван ен кӗтесӗ нумай пулӑшать. Пирӗн ача-пӑча садӗнче кашни ӳсӗм ушкӑнӗнчех тӑван ен кӗтесӗ пур. Унта чӑваш енӗн пурнӑҫӗ ҫинчен, чӑваш халӑхӗн паллӑ ҫыннисем ҫинчен, чӑваш халӑх йӑли-йӗркипе паллаштаракан кӗнекесем тата ӳкерчӗксем пур. Кӗтесре тата чӑваш хатӗр-хӗтӗрӗ, чӑваш тӗррин элеменчӗсем, чӑваш енпе ачасене ҫывӑхрах паллаштарма пулӑшакан нумай тӗрлӗ материалсем тата вӗрентекенсемпе ашшӗ-амӑшӗ пулӑшнипе усӑ курса хӑйсен аллипе тунӑ вӑййасемпе, материалсем пуянлатса тӑраҫҫӗ. Тӑван ен кӗтесне вӗрентекенсемпе ашшӗ-амӑшӗсем ҫӗнетсех тӑраҫҫӗ.

Пирӗн ача-пӑча садне аслӑ ушкӑна ҫӳрекен «Ромашка» ачисем тата пирӗн вӗрентекен Иванова Зоя Витальевна, 200 -мӗш ҫулта Республика шайӗнче иртекен «Тӑван енпе культурӑн чи лайӑх кӗтесӗ» конкурсра Лауреат ятне илме тивӗҫ пулчӗҫ.

Кашни ҫулах юпа уйӑхӗнче пирӗн ача садӗнче чӑваш юрри-ташшисен уявӗ иртет. Ҫак уява ачсем нумай вӑхӑт хатӗрленеҫҫӗ. Вӗсене ашшӗ-амашӗсем те пулашаҫҫӗ ҫак уява хатӗрленме.

Чӳк уйӑхӗнче пирӗн ачасем «Анюк» патне хӑнана кайса чӑваш халӑхӗн ӗҫӗ-хӗлӗпе тӗплӗнрех паллашаҫҫӗ. Чӑваш хӗрӗсем мӗн авалтанах тӗрлеме юратнӑ. Тӗрлеме пӗлмен хӗр качча та кайман. Анюк ачасене кащни тӗрӗ мӗн пӗлтернипе палаштарать. Чӑвашсем тӗрӗ усал-тӗселтен сыхласа тӑнине ӗненнӗ. Ҫавӑнпа та пирӗн ачасем те ҫак пӗлӗве хӑйсен ачисене кайран каласа парасса шанатпӑр.

Раштав уйӑхӗ пирӗн ача-пӑча садӗнче мероприятисемпе пите пуян. Ку уйӑх ҫемьеме сыхӑннӑ. Ҫавӑнпа та ку уйӑхра пирӗн ачасем кӑна мар, ашшӗ-амашӗсем те хастар хутшӑнаҫҫӗ. Чӑвашсем мӗн авалтан ниме ирттернӗ, кашни ӗҫех пӗрле вӗҫлесе, кайран вара пӗрле савӑнма тӑрӑшнӑ. (атте-анннепе "пӗрле пултаруллӑх лаҫҫи «Султалӑк символӗ», ҫемье конкурсӗ «Чӑваш халӑх апатҫимӗҫӗ», ӳкерчӗксен конкурсӗ «Ман ҫемье»).

Кӑрлач уйӑхӗнче пирӗн ача садӗнче «Асанне арчинче» эрни иртет. Ку эрнене вӗрентекенсем хӑйсем кӑна мар, наци музейӗн сотрудникӗсемпе пӗрле ирттереҫҫӗ. Ачасем выляса та савӑнса чӑваш халӑх тумӗпе тата пуҫ тумӗпе паллашаҫҫӗ.

Нарӑс уйӑхӗнче эпир ачасемпе хӗллепе сыв пуллашатпӑр, ҫӑварни уявне ирттеретпӗр.

Ака уйӑхӗнче Чӑваш Республикин пысӑк уяв – Чӑваш чӗлхипе культура кунӗ. Пирӗн ача-пӑча сачӗ те айккине тӑрса юлмасть. Ҫак уява ҫын тӗлӗнмелле ирттерет. Кашни ҫулах пирӗн пата «Уяв» ушкӑн килсе савӑнтарать. Ачасем те хаваспах хутшанаҫҫӗ ҫак уява.
Ку уйӑхра ачасем И.Я.Яковлев пултарулӑхӗпе тӗплӗнрех паллашаҫҫӗ.

Ҫу уйӑхӗнче пирӗн Раҫҫей халӑхӗн питӗ пысӑк уяв – Ҫӗнтеру кунӗ. Ҫавӑнпа та эпир пирӗн ачасене асаттте-асаннесем ҫӗнтеру ситермешкӗн мӗнлерех тӑрӑшнипе, кӗрешнипе паллаштаратпӑр, каласа паратпӑр.

Ҫуллахи вӑхӑтра акатуй, ҫемье кунӗпе, сӑпас праҫникӗпе, Питрав кунӗпе ҫывӑхрах паллаштаратпӑр, тӗрлӗрен мероприятисем ирттеретпӗр.

Пирӗн ача-пӑча садне ҫӳрекен шкул ҫулне ҫитмен ачасем тӗрлӗрен конкурссенче хастар хутшӑнаҫҫӗ, малти вырӑнсем йышӑнаҫҫӗ.

Пирӗн вӗрентекенсем те питӗ маттур та хастар ҫынсем. Вӗсем хӑйсен пултаруллӑхӗпе, ӗҫӗ-хӗлӗпе ытти вӗрентекенсемпе хаваспах каласа, кӑтартса параҫҫӗ, конкурссенче малти вырӑнсем йышӑнаҫҫӗ.

Эпир хамӑр проект хӳтӗлевне Петӗр Хусанкай сӑмахӗсемпе вӗҫлесшӗн: «Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр!»